

# ПАЯНХИ ЯЛ

Проект Вăрнар муниципаллă округĕ пулăшнипе пурнăçа кĕрет

# Ял аталанăвĕшĕн – пĕрлехи вăйпа

**Влаçăн халăхпа чи çывăх хутшăнса ĕçлекен звенови – вырăнти территори пайĕсем. Вĕсен пĕрремĕшле тивĕçĕсен шутĕнче – ку территорисенчи çынсен пурнăçне хăтлăрах тăвасси, куллен тухса тăракан ыйтăвĕсене татса пама пулăшасси. Çавăнпа та вĕсен ĕçĕ чи малтанах çынсен сĕнĕвĕ-ыйтăвĕсене, хушăвĕсене пурнăçласси çинче йĕркеленет.**

Малти Ишекри территори пайĕн ертӳлĕхĕ те, акă, ял çыннисемпе яланах уçă калаçура, тачă çыхăнура. Мĕншĕн тесен пурин те пĕр тĕллев пулмалла – тăван тăрăх ăнăçлă аталантăр, пурнăç условийĕсем май килнĕ таран лайăхланса пыччăр. Çакă кашни çын тăрăшнинчен, ял пурнăçĕпе тата проблемисемпе пуренлĕ кăсăкланнинчен нумай килнине палăртать территори пайĕн пуçлăхĕ Вячеслав Ластухин.

Ĕçĕ вара пысăк хула-поселоксене кăна мар, ялă вырăнсенче те кирек хăçан та тем чухлех. Çивĕч ыйтусем те çаплипех сахал мар. Вĕсене татса парасси нумай чухне финансировани шайĕпе çыхăннă. Администрацин умри тĕллевсене пурнăçлама бюджетсăр пуçне урăх укçа-тенкĕ çăлкуçĕ çук. Çавăнпа та проблемăсене çак вăхăтри кирлĕлĕхне, çивĕчлĕхне кура майĕпен, пĕрин хыççăн теприне татса пыма тивет.

Хальхи вăхăтра, акă, çул-йĕр юсавĕ енĕпе тимлеççĕ. Нумаях пулмасть Çăлкас Кăкшăмри Тĕп урамри хытах шăтăк-путăкланнă участока 114 метр вĕт чул сарнă. Ĕçе Юрий Волков подрядчик пурнăçланă. Ăна, пахалăхне хакласа, округ комиссийĕ йышăннă ĕнтĕ. «Малти Ишек – Айкăш» çулăн вăйлах арканнă пайĕнче те (Айкăш пуçламăшĕнчен мехпарк еннелле) 166 метр асфальт сийне çĕнетеççĕ, ун айăккисене те майласа çирĕплетмелле.

Хăтлăх ĕçĕсем пирки калас-тăк, кăçал ялсенче урамри çутă тытăмне çĕнетесси те (çав шутра – светильниксене хăватлăраххисемпе улăштарасси) планра пур. Çак ĕç пĕтĕмĕшле округ управленийĕ урлă пурнăçланмалла.

Юрать, наци проекчĕсен тата ытти патшалăх программисен пулăшăвĕ курăмлă. Малти Ишек тăрăхĕнче те социаллă инфраструктурăна çĕнетме, халăхпа сӳтсе явса, вĕсене активлă хутшăнма тăрăшаççĕ. Документсем хатĕрлесе конкурссене тăратаççĕ, вĕсем витĕр ăнăçлă тухаççĕ.

Юлашки вăхăтра, акă, пуçаруллă бюджет программи хăйне лайăх кăтартрĕ. Вăл ĕçлеме пуçланăранпа Малти Ишек тăрăхĕнче 11 проекта пурнăçа кĕртме пултарнă. Пурте вĕсем çынсем хăйсем сĕннипе пуçарнисем, çав самантра чи пĕлтерĕшли тесе йышăннисем.

– Калас килет, пуçаруллă бюджет программине эпир республикăра чи малтисен йышĕнче, районта вара пĕрремĕш хутшăнтăмăр. Ун чухне Малти Ишекри культура çуртне икĕ тапхăрпа тĕплĕ юсаса çĕнетрĕмĕр. Халăх тăрăшнипе тата патшалăх пулăшăвĕпе çынсен кану вырăнне хăтлăлатма май килчĕ, – пĕлтерчĕ Вячеслав Эмануилович.



Çула тĕрĕслеççĕ.



Малти-ишексем Акатуйра совет тапхăрне сăнлаççĕ.

Проектсенчен ытларахăшĕ çулсене юсассипе çыхăннă. Çакă ялсенче унччен йĕпе-сапара кĕрсе çӳреме кансĕр пулнă чылай урамри çулсене йĕркене кĕртме май панă. Акă, Çăлкас Кăкшăмра пурăнакансем питĕ хастар. Ку программăна пĕрре мар хутшăнса мĕнпур урамри çулсене тенĕ пекех вĕт чулпа сартарса хытарнă. Пĕлтĕр, акă, ку ырлăх Овражная урама та çитнĕ.

Унсăр пуçне, пуçару йĕркипе Малти Ишекре те çул участокĕсене юсанă. Çитес çул пулăшупа чалăм-кăкшăмсем те усă курасшăн – Шоссейная тата Зеленая урамсенче çул юсавне 1090 м тăршшĕ иртересшĕн. Вĕсем программа условийĕ тăрăх хăйсен укçа-тенкĕ пайне пухнă ĕнтĕ, республика-федераци бюджетĕнчен софинансировани тивĕçме проект документацийĕ те хатĕр.

Çавăн пекех вăрçă çулĕсенче Аслă Çĕнтерӳшĕн пуçĕсене хунисене те манмаççĕ, вĕсен паттăрлăхне халалланă палăксем те асăрхаврах. Виçĕмçул вара çĕнĕ астăвăм палăкĕ çĕкленнĕ – ырă пуçарăва айкăшсем программăна хутшăнса пурнăçа кĕртнĕ.

Ку тăрăхра пурăнакансемшĕн аслă тăванĕсем юлашки канăç тупнă вырăна тирпейлĕхре тытасси те сăваплă. Пуçаруллă проектсен тепĕр пайĕпе шăпах та масарсене йĕркене кĕртессипе пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. Тĕрлĕ çулсенче малти-кăкшăмсен, çăлкас-кăкшăмсемпе хурăн-кăкшăмсен çăвисем çинче пӳрчĕ-картисене ылмаштарнă, малти-ишексем те çуртне çĕнĕрен çĕклесе лартнă. Уйрăммăн каласа хăвармалла, ахаль чухне те ял çыннисем масарсенче пĕрмаях тасалăх пултăр тесе тăрăшаççĕ. Йышпа субботниксене тухасси йăлара, кăçал та мĕнпур ялсем çӳп-çапа, типĕ çулçăсемпе хыт-хурана тасатса хастар вăй хунă.

Малти Ишек территори пайĕнче паянхи кунхи тĕп ĕç шутĕнче – Çăлкас Кăкшăмра фельдшерпа акушер пунктне хута яма хатĕрленни. Çак вăхăта строительство тапхăрне пĕтĕмпех вĕçленĕ ĕнтĕ. Вячеслав Эмануилович строительсен ушкăнĕн яваплăхĕпе, пахалăхлă тимленипе питĕ кăмăллине каларĕ.

Çурт тавралли территорие хăтлăх кĕртме те конкурсра вĕсемех тивĕçнине кура ĕçсене кирлĕ пек, вăхăтра ирттересси иккĕлентермест. Çавăн пекех ку объектра сĕтел-пуканпа, медицина оборудованийĕпе, медикаментсемпе тивĕçтерессиçеç юлнă. Кунта сала çыннисене медицина пулăшăвĕ кӳме лайăх условисем пулĕç. Ялшăн пĕлтерĕшлĕ çак майсем «Сывлăх сыхлавĕ» наци проектне пула уçăлаççĕ – çĕнĕ çурта шăпах ун йĕркипе çĕкленĕ. Маларах вара наци проекчĕ пулăшнипе Малти Ишекре те модульлĕ ФАП туса лартнă – вăл пациентсене 2017 çултанпа йышăнать.

Ырă улшăнусем, чăнах та, савăнтараççĕ ял çыннисене, анчах тепĕр «ырату» та пур çăлкас-кăкшăмсемпе хурăн-кăкшăмсен. Çăлкас Кăкшăм салинче, акă, культура çурчĕ 1959 çултах уçнăскер. Çитменнине, ăна ун чухне тахăш ялтан склад çурчĕ пулнăскерне килсе лартнă. Çав вăхăтранпа самаях кивелсе-çĕрĕшсе пĕтнĕ вăл, «косметикăллă» юсавсене пула тытăнса тăрать.

«Патшалăх программипе пире те модульлĕ культура çурчĕ тивĕçессе чăтăмсăррăн кĕтетпĕр», – теççĕ кунта пурăнакансем. Ку ыйтăва округра та хускатнă, республика шайĕнче те çĕкленĕ. Майлă татăлсен ку питĕ кирлĕ культура объекчĕ çамрăксем валли те, аслисемшĕн те хăтлă кану вырăнĕ пулса тăрĕччĕ. Тата унта библиотекăна куçарма май пулсан та тем пекехчĕ. Хальхи пӳлĕмре сивĕ, нӳрĕ – кĕнеке фончĕ те сиенленет.

Çапах та, хăшпĕр йывăрлăхсем пур пулин те, ял çыннисен культура пурнăçне пуянлатма, спортпа туслаштарма, канăвне йĕркелеме пуренлĕ тăрăшаççĕ Малти Ишекри территори пайĕнче. Праçниксемпе тĕрлĕ паллă датăсем тĕлне уяв программисене интереслĕ хатĕрлеççĕ, округри мероприятисене те активлă хутшăнаççĕ. Волейбол, футбол турнирĕсем, çăмăл атлетикăпа çуллахи спартакиадăсем, йĕлтĕр чупăвĕсем, шашка-шахмат турнирĕсем... – спорт пурнăçĕ те тулли. Ачасене вăхăта усăллă ирттерме вара пилĕк кружок-секци ĕçлет.

Территори пайĕн ертӳлĕхĕ енчен çавăн пекех вăрçă ветеранĕсемпе тыл ĕçченĕсене пулăшу кӳресси те, ятарлă çар операцине хутшăнакансен çемйисем те асăрхаврах.

Пĕтĕмлетсе калас-тăк, вырăнти чи пĕлтерĕшлĕ ыйтусене – пурăнакан вырăна хăтлăх кĕртессине, социаллă тивĕçтерӳсене илме майсем тăвассине, халăх канăвне йĕркелессине тата ыттине – мала кăларса тимлет территори пайĕн администрацийĕ.

– Малашне те ял çыннисемпе çывăх хутшăнура, ăнланура тăрăшассине шанатпăр. Пĕрлехи вăйпа, паллă ĕнтĕ, тăван тăрăхшăн ӳсĕмлĕ пысăк ĕçсем тума май пулĕ. Хастарлăх кăтартнăшăн, пулăшса пынăшăн уйрăмах администраци, культура, техслужба ĕçченĕсене тав тăватăп. Ял çыннисене те активлăхшăн пысăк тав. Вĕсен кашни сĕнĕвĕ-хушăвĕ ĕçе тĕрĕс йĕркелеме, чи çивĕч ыйтусене тимлĕхе кăларма май парать, – палăртрĕ Вячеслав Ластухин ертӳçĕ.

**Ирина ЯКОВЛЕВА**



Çăлкас Кăкшăмри Шкул тăкăрлăкĕнчи çĕнĕ çул.



Субботникра та хастар.